Рабочая программа общего образования
обучающихся с умственной отсталостью
(интеллектуальными нарушениями)
вариант 1
«Родной (чувашский) язык»
5-9 классы

## Ăнлантарса пани

**Программăна хатĕрленĕ чухне çак документсене тĕпе хурса ĕçленĕ:**

- Федерального государственного образовательного стандарта основного общего образования (утвержден приказом Минобрнауки России от 17.12.2010 г. № 1897, (зарегистрирован в Минюсте России 01.02.2011 г., регистрационный номер 19644), с изменениями, внесенными приказами Министерства образования и науки № 1644 от 29.12.2014; № 1577 от 31 декабря 2015);
- учебного плана МБОУ «Нискасинская средняя общеобразовательная школа» Моргаушского района Чувашской Республики;
- основной образовательной программы основного общего образования МБОУ «Нискасинская СОШ» Моргаушского района Чувашской Республики
- - Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли. И.А.Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2013;

**Программăна пурнăçа кĕртмелли вăхăт: 2024-2025 вĕренӳ çулĕ**

**<u>5 класс</u>**

- - Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли. И.А.Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2013;
- - Чăваш чĕлхи: 5 класс валли. Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева, Г.Ф.Брусова – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви

**Чăваш чĕлхи предмечĕн вĕрентӳ планĕнчи вырăнĕ.**

Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулти 5-мĕш класс ачисен пĕлĕвĕ тĕрлĕ шайра. Вĕренӳ учрежденийĕнче чăваш челхи сехет шучĕпе базис планне пăхăнса тăрать. Пурĕ – 34 сехет. Эрнере – 1 сехет.

**Вĕренӳ материалне çапла пайланă:** 5 класс (34 сехет)

**<u>6 класс</u>**

- Л.Г.Петрова, Ю.М.Виноградов. Чăваш чĕлхи: 6-мĕш класс валли / Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви

Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулти 6-мĕш класс ачисен пĕлĕвĕ тĕрлĕ шайра. Вĕренӳ учрежденийĕнче чăваш чĕлхи сехет шучĕпе базис планне пăхăнса тăрать. Пурĕ - 34 сехет, эрнере -1 сехет.

**<u>7 класс</u>**

- **учебник:** Чăваш чĕлхи: 7 класс валли. Ю.М.Виноградов, Л.Г.Петрова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви

- **программа**: Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 валли / И. Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013.- 63с.

Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулти 7-мĕш класс ачисен пĕлĕвĕ тĕрлĕ шайра. Вĕренӳ учрежденийĕнче чăваш чĕлхи сехет шучĕпе базис планне пăхăнса тăрать. Пурĕ - 34 сехет, эрнере - 1 сехет.

**<u>9 КЛАСС</u>**

Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви çирĕплетнĕ вĕренӳ планĕ тăрăх чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхи вĕрентме 9 класра эрнере 1 сехет уйăрнă.

Ку программăна И. А. Андреев профессор çырнă патшалăх стандарчĕпе ( Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулти чăваш чĕлхи. Патшалăх стандарчĕ.) тата программăпа ( Чăваш чĕлхи программи : Чăваш шкулĕн 5-9 мĕш класĕсем валли И. А. Андреев хатĕрленĕ, 2007 ) усă курса çырнă.

**Вĕренӳ кĕнеки:** 1.Чăваш чĕлхи 9 класс. Виноградов Ю.М., Егорова А.С., Петрова Л.Г.. Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви

**Хушма литература:** Виноградов Ю. М. Хăнăхтару пуххи: 8-9 класс валли. – Шупашкар: 2011. - 163 с.

## «Чăваш чĕлхи» предметăн тĕп тĕллевĕсемпе задачисем:

- вĕренекенсен калаçăвĕпе çырăвне аталантарасси тата тĕрĕс те илемлĕ вулама хĕнĕхтарасси
- вĕренекенсен калаçăвне тĕрĕс йĕркелесси
- ачасене сăмахсемпе выранлă та тирпейлĕ усă курма вĕрентесси тата вĕсен лексикине пуянлатасси
- вĕренекенсен логикăллă шухăшлавне аталантарасси
- вĕренекенсене фонетика: лексика: грамматика никĕсĕсемпе тата чĕлхе наукин тĕп ыйтăвĕсемпе: чĕлхен общество пурнĕçĕнчи вырĕнĕпе паллаштарасси
- орфографипе пунктуаци ханăхăвĕсене çирĕплетесси
- уроксенче ачасен çыхăнуллă калçăвне аталантарасси
- тăван чĕлхене юратма, чĕлхе урокĕсенче илнĕ пĕлӳпе ӳлĕмрен пурнăсра, ĕçре усă курма хăнăхтарасси
- грамматикăн кашни темине вĕрентнĕ. чух ачасене литература чĕлхин çирĕпленнĕ нормисемпе паллаштарасси, пуплеве çав нормăсене пăхăнса йĕркелеме вĕрентесси

***9 – мĕш класс пĕтерекен ачасен мĕн – мĕн пĕлмелле:***

- сасăпа сас палли хушшинчи уйрăмлăха ăнлантарма;
- уçă сасăсемпе хупă сасăсен ушкăнĕсем çинчен каласа пама;
- хупă сасăсен янравлăхĕпе çемçелĕхне ăнлантарма;
- пуплев пайĕсемпе вĕсен формисене пĕр – пĕринчен уйăрма;
- сăмах пулăвĕпе сăмах улшăнăвне пĕр – пĕринчен уйăрма;
- чĕлхепе пуплев мĕн иккенне, чĕлхе пуплевре кăна палăрнине, пуплевре кăна аталанма пултарнине ăнлантарма;
- калаçура та, çырура та сăмах йĕркине кирлĕ пек тытса пыма;
- тĕрлĕ темăпа хайлав çырма;
- пĕр – пĕр темăпа кĕске доклад тума, тухса калаçма;
- ĕçлĕ çыру е хăш – пĕр ĕç хучĕсене çырма (ыйту, акт, характеристика)

## <u>1.Вĕренӳ результачĕсем</u>
## (пĕлмелле, пултармалла)

### <u>Харкамлăх (личностные ) результачĕсем:</u>

1) тăван чĕлхе чăваш халăхĕн наци пурлăхĕ пулнине, Чăваш Республикинче вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулнине ăнланни; тăван чĕлхепе ӳлĕмрен кулленхи пурнăçра, суйласа илнĕ профессире усă курма пултарни;

2) чăваш чĕлхин илемлĕхне хаклама пултарни, тăван чĕлхене хисеплени, унпа мăнаçланни; чăваш пуплевĕн нормисене наци культурин пуянлăхĕ шайне лартса сыхласси кашни чăвашшăн пысăк тивĕç тесе йышăнни; пуплеве куллен-кун аталантарма тăрăшни;

3) шухăшпа туйăма палăртма усă куракан сăмахсем, грамматика хатĕрĕсем пуплевре йышлă пулни; ача хăй пуплевне (калаçнине те, çырнине те) сăнаса тивĕçлĕ хак пама пултарни.

**<u>Пур предмета та (метапредметные) вĕренме кирлĕ результатсем:</u>**

1) пуплевĕн мĕн пур тĕсĕпе усă курни:

. сăмахпа каласа е çырса пĕлтернĕ информацие тĕрĕс ăнланни;

. вулавăн тĕрлĕ мелĕпе усă курни;

. тĕрлĕ çĕртен (хаçат-журналтан, Интернетран, радиопа телевиденирен т.ыт.те) килекен материалпа паллашса информаци пухма пултарни;

. ку е вăл темăпа çыхăннă материала вуласа е илтсе тупма, ăна пухса, тишкерсе, кирлине суйласа илме пултарни; пухнă информацие сыхлама, улăштарма тата кирлĕ çĕрте усă курма пултарни (информаци çăл куçĕ хаçат-журнал, тĕрлĕрен техника хатĕрĕ пулма пултарать);

. пĕччен е ушкăнпа тумалли вĕренӳ ĕçĕн тĕллевне, йĕркине ăнланса илни, ĕç результатне каласа е çырса хаклама пултарни;

. шухăша сăмах вĕççĕн е çырса ирĕклĕ те тĕрĕс уçса пама пултарни;

. тантăшсем умĕнче пĕчĕк е пысăкрах доклад тума хăнăху пурри;

2) вĕренӳре илнĕ тĕрлĕ пĕлӳпе, нумай-нумай хăнăхупа яланхи пурнăçра усă курни; тăван чĕлхене вĕренсе пухнă пĕлӳпе тата хăнăхупа ытти предмета (тăван мар чĕлхесене, литературăна т.ыт.те) вĕренме усă курни;

3) калаçнă май, пĕр-пĕр ĕç тунă чух е мĕнле те пулин тавлашуллă ыйтăва сӳтсе явнă чух çынсемпе тĕрлĕ çыхăнăва кĕме хăнăху пурри; пĕр-пĕр йĕркепе иртекен хутшăнура е яланхи калаçура наци культуринче çирĕпленнĕ пуплев нормисене пăхăнни.

**<u>Предмета (предметные) вĕреннин результачĕсем:</u>**

**5класс пĕтерекен ачасен çаксене тума пултармалла:**

- текстăн тĕп шухăшне, темине, тĕллевне ăнланса текста тишкерме пĕлни;
- сăмахсене сыпăксем çине пайлама; - сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма;
-синонимлă формăсемпе тĕрĕс усă курма;
-чĕлхен нормине (орфоэпи, орфографи, лексика, грамматика нормисене) пăхăнма;
- калаçура этикет нормисене пăхăнма;
- орфографи тата пунктуаци правилисене тĕрĕс усă курса çырма;
-тӳрĕ пуплеве тӳрĕ мар пуплевren уйăрма;
-сасăпа сас паллисене уйăрма, сасăсене ушкăнлама; хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне, янравлăхĕпе янăравсăрлăхне, вăрăмлăхне çырура палăртма;
-тăван сăмахсемпе вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тĕрĕс ударенипе калама;
- сăмах пĕлтерĕшĕсене ăнлантарма, синонимсем, антонимсем е омонимсем тупма;
- синонимсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма;
-иккĕмĕшле сăмахсене пĕрремĕшлисенчен,

***Ачасен пултараяслăхĕ***

*Палăртнă результат тăрăх калаçу ситуацийĕпе ăнăçулăха пăхса хăй тухса калаçнине тишкерме; калаçу ăнăççăрлăхĕн тĕп сăлтавĕсене ăнланма тата ăнлантармапултарни;*

*- сăмахсене тĕрĕс, вырăнлă тата илемлĕ калас тĕлĕшĕнчен пăхса хăйĕн тата ют çын калаçăвне хак пама пултарни;*

*- чĕлхен илемлĕх мелĕсене пĕлни;*

**6 класс п.терекен ачасен м.н-м.н п.лмелле%**

**Ачасен çаксене тума пултармалла:**

- текстăн тĕп шухăшне, темине, тĕллевне ăнланса текста тишкерме пĕлни;
- сăмахсене сыпăксем çине пайлама; - сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма;
-синонимлă формăсемпе тĕрĕс усă курма;
-чĕлхен нормине (орфоэпи, орфографи, лексика, грамматика нормисене) пăхăнма;
- калаçура этикет нормисене пăхăнма;
- орфографи тата пунктуаци правилисене тĕрĕс усă курса çырма;
-тӳрĕ пуплеве тӳрĕ мар пуплеврен уйăрма;
-сасăпа сас паллисене уйăрма, сасăсене ушкăнлама; хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне, янравлăхĕпе янăравсăрлăхне, вăрăмлăхне çырура палăртма;
-тăван сăмахсемпе вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тĕрĕс ударенипе калама;
- сăмах пĕлтерĕшĕсене ăнлантарма, синонимсем, антонимсем е омонимсем тупма;
- синонимсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма;
-иккĕмĕшле сăмахсене пĕрремĕшлисенчен,

***Ачасен пултараяслăхĕ***

*Палăртнă результат тăрăх калаçу ситуацийĕпе ăнăçулăха пăхса хăй тухса калаçнине тишкерме; калаçу ăнăçсăрлăхĕн тĕп сăлтавĕсене ăнланма тата ăнлантармапултарни;*

*- сăмахсене тĕрĕс, вырăнлă тата илемлĕ калас тĕлĕшĕнчен пăхса хăйĕн тата ют çын калаçăвне хак пама пултарни;*

*- чĕлхен илемлĕх мелĕсене пĕлни;*

**7класс пĕтерекен ачасен çаксене тума пултармалла:**

- чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывни; чĕлхен шайĕсемпе единицисем хушшинчи çыхăнусене ăнланни;
- чĕлхе ăслăлăхĕн тĕп ăнлавĕсене алла илни: чĕлхе вĕрентĕвĕ тата унăн тĕп пайĕсем; чĕлхе тата пуплев, пуплевпе усă курса хутшăнни, калаçу тата çыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийĕ; пуплевĕн функципе шухăшран килекен тĕсĕсем (калав, сăнлав, ăслав); текст, чĕлхе единицисем, вĕсен паллисем тата пуплевре усă курнă чухнехи уйрăмлăхсем;
- сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме пĕлни, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текста ун содержанийĕ, тĕп паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;
-тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

***Ачасен пултараяслăхĕ***

*- Палăртнă результат тăрăх калаçу ситуацийĕпе ăнăçулăха пăхса хăй тухса калаçнине тишкерме; калаçу ăнăçсăрлăхĕн тĕп сăлтавĕсене ăнланма тата ăнлантарма пултарни;*

*- сăмахсене тĕрĕс, вырăнлă тата илемлĕ калас тĕлĕшĕнчен пăхса хăйĕн тата ют çын калаçăвне хак пама пултарни;*

*- чĕлхен илемлĕх мелĕсене пĕлни.*

**9 класс пĕтерекен ачасен мĕн-мĕн пĕлмелле?**

**Ачасен çаксене тума пултармалла:**

_ сăмах майлашăвĕпе предложени уйăрмлăхĕсене ăнлантарма;

_ анлă сăмах майлашăвĕсене ансăррисенчен уйăрма;

_ пуплеври сăмах çыхăнăвĕн мелĕсене палартма;

_ предложенири шухăш тĕшшине тупма (ыйту тăрăх та, шухăш тĕшшине палăртмалли мелсем тăрăх та);

_ предложенири сĕмахсене предложенин содержанине кура вырнаçтарма;

_ ыйтăва сăпайлăрах тума;

_ предложенин темипе ремине тупма;

_ предложени членĕсене тата вĕсен çыхăнăвне палăртма;

_ хутсăр предложенире чарăну паллисене тĕрĕс лартма, вĕсене ăнлантарма;

_ тӳрĕ пуплеве тӳрĕ марринчен уйăрма

***Ачасен пултараяслăхĕ***

- *Палăртнă результат тăрăх калаçу ситуацийĕпе ăнăçулăха пăхса хăй тухса калаçнине тишкерме; калаçу ăнăçсăрлăхĕн тĕп сăлтавĕсене ăнланма тата ăнлантарма пултарни;*

- *сăмахсене тĕрĕс, вырăнлă тата илемлĕ калас тĕлĕшĕнчен пăхса хăйĕн тата ют çын калаçăвне хак пама пултарни;*

- *чĕлхен илемлĕх мелĕсене пĕлни.*

**Родной (чувашский) язык. Чăваш чĕлхи.**

Чăваш чĕлхи вĕрентнин тĕп тĕллевĕ- ачасене кулленхи пурнăçра чăвашла хутшăнма вĕрентесси. Кашни урокрах ачасене чăвашла пуплеве ăнланма, чăвашла калаçма, вулама-çырма вĕрентмелле, урăхла каласан, вĕсен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантармалла. Ачасен чăваш чĕлхин илемлĕхне хаклама пултармалла, тăван чĕлхене хисеплемелле, унпа мăнаçланмалла.

**<u>Чăваш чĕлхи предмечĕн содержанийĕ</u>**

**<u>5 класс -34 сехет</u>**

Тăван чĕлхе пур чух халăх та пур (кӳртĕм урок)

Пуçламăш классенче вĕреннине аса илсе çирĕплетесси, хушса вĕрентесси

1. Сасă тата сас палли. Алфавитри сас паллисен йĕрки, вĕсен хисепĕ.

Сăмах тытмĕ, тымар тата аффикссем.

Вĕреннĕ пуплев пайĕсене аса илесси.

Хутсăр предложени, унăн членĕсем.

Пĕр йышши членсем, вĕсем союзсăр е союзсемпе çыхăнни. Пĕр йышши членсене чарăну паллисемпе уйăрасси.

Чĕнӳ сăмахĕсем (обращенисем), вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси.

Туйăмлă (кăшкăруллă) предложенисем. Предложени вĕçне чарăну палли лартасси.

Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем, вĕсенче чарăну паллисем лартасси.

Ыйтусăр тата ыйтуллă предложенисем. Ыйту сăмахĕсем: кам? мĕн? ăçта? хăçан? миçе? мĕншĕн? мĕн пирки? т.ыт.те.

Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем. Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем умĕн е хыççăн тăни, чарăну паллисем лартасси.

II. Ыйтуллă предложенисене ыйтусăррисенчен уйăрма хăнăхасси. Ыйтăва тĕрĕс йĕркелеме, ăна тĕрĕс хуравлама хăнăхасси (тулли хуравпа кĕске хурав). Предложени вĕçне тивĕçлĕ чарăну палли лартма, пĕр йышшши членсемпе чĕнӳ сăмахĕсене чарăну паллипе уйăрма

хăнăхасси.

## ФОНЕТИКА. ГРАФИКА. ОРФОГРАФИ

1. Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ (хытă тата çемçе уçă сасăсем). Вырăсларан йышăннă сăмахсенчи [о] уçă сасă.

Уçă сасăсене палăртакан сас палли сем (**а, ă, е, ĕ, у, ÿ, ç, ы, и, э, ю, я, ç**).

Ю, я сас палли сем, вĕсем икĕ сасса (***йурă, йухать)*** умĕнхи хупă сасă çемçелĕхне ***(выля, Люся)*** палăртни.

Е сас палли  икĕ сасса ***(йешĕл, йепле)*** тата [э] сасса палăртни ***(этем, элек).***

Чăваш чĕлхинчи [й] хупă сасă ытти уçă сасăсем умĕн те тăма пултарни: ***йăмра, йĕлтĕр, йывăр, йÿçĕ, йÿçĕтнĕ, кĕсйи.***

Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарайманни.

Вырăсларан йышăнакан сăмахсенчи уçă сасăсен юнашарлăхĕ ***(аэропорт, аут, поэт, Дуайт).***

Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ (сингармонизм). Ку килĕшĕве пăхăнман тĕслĕхсем ***(тăри, кавле, куклен, парне*** т.ыт.те).

Сăмахри аффикссем ытларах чух сингармонизма пăхăнни ***(çурт-ра, пÿрт-ре, пур-лăх, çитмен-лĕх, лар-у, кĕт-ÿ)***. Сингармонизма пăхăнман аффикссем: ***юлташ - сем, ял - ти, юрă – юрри, кай - иччен*** т.ыт.те.

Вырăсларан йышăнакан сăмахсем сингармонизма пăхăнманни ***(орден, тетрадь, депо).***

Вырăсларан йышăнакан  сăмахсем çумне хушăнакан аффкссен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ.

Хупă сасăсем. Ялан янăравлă (в, й, л, ль, м, н, вь, р) тата шавлă хупă сасăсем (к, п, т, х, с, ç, ч, ш).

Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ, уçă сасăсенчен килекен çемçелĕх ***(пилеш, кĕлет, тĕлĕк),*** уçă сасăсенчен килмен çемçелĕх ***(халь, выльăх, супăнь, курать, юрать).***

Хытăлăхпа çемçелĕх йĕркине пăхăнман хупă  сасăсем (с, ç, ч, й), вĕсем хытă уçă сасăпа та, çемçе уçă сасăпа та юнашар тăма пултарни: ***сарă — симĕс, çурла — çÿхе, чарăн– чĕрĕк, йурă — йÿнĕ.***

Шавлă хупă сасăсем янăраса е янăмасăр илтĕнни, вĕсене çырура палăртасси.

Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, вĕсене çырура палăртасси ***(кулă — кулли, ырă — ырри, ахаль — ахальлĕн*** т.ыт.).

Вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенчи хупă сасăсен  хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ, вĕсене çырура палăртасси.

***Промышленность — промышленноçăн, повесть — повеçре*** йышши сăмахсене çырасси.

Икĕ пĕрешкел сасăпа вĕçленекен сăмахсене çырасси ***(металл — металăн, металшăн, класс — класра, класăн*** т.ыт.те).

Вырăсларан çыру урлă йышăнакан сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ÿ сас паллисене çырасси.

Ударени (пусăм). Чăваш сăмахĕсенчи ударени йĕрки.

Вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенчи ударени.

Уçă сасăсемпе хупă сасăсем сăмахран тухса ÿкни: ***эпĕ — эп, эсĕ — эс, вунă — вун, пурăн — пурнăç, тăхлачă — тăхлач, пар — патăм, панă; тăр — тăтăм, тăнă.***

Сасăсен ылмашăвĕ ***(хут — хучĕ, тетрадь — тетрачĕ).***

*Чăваш чĕлхинчи сасăсемпе вырăс чĕлхинчи сасăсем, вĕсен пĕр пеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсем.

*Чăваш сăмахĕсенчи ударенипе вырăс сăмахĕсенчи ударени.

II. Орфографипе орфоэпи нормисене çирĕплетессипе ĕçлесси. Хупă сасăсен çемçелĕхĕне тăван сăмахсенче тата вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенче çырура тĕрĕс палăртасси. Шавлă хупă сасăсен янăравлăхĕпе янăравсăрлăхне çырура тĕрĕс палăртасси. Хăнăхусене çирĕплетесси.

Сăмахсене тĕрĕс ударенипе калама хăнăхтарасси.

Орфографи словарĕпе тата правилисемпе усă курма хăнăхтарасси.

Алфавита пăхмасăр калама вĕрентесси. Сăмахсенче алфавитпа çырма вĕрентесси.

## ЛЕКСИКА

1. Лексика — чӗлхери сӑмахсен пуххи. Лексика пурнӑҫри улшӑнусемпе тачӑ ҫыхӑнни. Кивелнӗ е кивелсе пыракан сӑмахсем, ***кӳнтелен «свидетель», чуптар*** (лаша тӗсӗ), ***шупӑр, йӗлен*** т.ыт. Ҫӗнӗ сӑмахсем, ***ентешлӗх*** (пӗр енчисем), ***юлташлӑх «товарищество», ӗҫтеш, ентеш, интернет, продюссер, коммерци, компьютер, фирма, слайд, ипотека*** т.ыт.
Сӑмах пӗлтерӗшӗ. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем. Сӑмахсен тӳрӗ тата куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗсем.
Ютран йышӑннӑ сӑмахсем, араб е перс сӑмахӗсем, мари сӑмахӗсем. Вырӑссенчен йышӑннӑ сӑмахсем, калаҫупа йышӑннисем ***(витре, пӗремӗк, пӗрене, пӑрӑс, кӗрепле, чиркӳ*** т.ыт.). Ҫырупа йышӑннисем ***(костюм, галстук, пальто, район, область, тетрадь, блокнот, магазин*** т.ыт.). Калаҫупа кӗнисемпе ҫырупа кӗнисене ҫырура палӑртасси.
Синонимсем, антонимсем, омонимсем.
Ятарлӑ сӑмахсем (профессионализмсем). *Диалект сӑмахӗсем.
Литература нормине пӑхӑнман сӑмахсем ***(ан палка, лӑпӑртат, епреме),*** киревсӗр сӑмахсем.
II. Калаҫу мӗнле лару-тӑрура (кампа, хӑҫан, ӑҫта) иртнине кура сӑмахсемпе вырӑнлӑ усӑ курма хӑнхтарасси ***(Хӑна килсен аш пиҫет; Ҫук ҫын укҫи тӑрнан кӑшкӑрать; Ҫук — вӑрҫтарать, пур — култарать*** т.ыт.те.). Ваттисен сӑмахӗсемпе, каларӑшсемпе паллаштарасси, вӗсемпе тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси.
Синонимсемпе антонимсене тупма, вӗсемпе пуплевре усӑ курма вӗрентесси.
Тӗрлӗ йышши словарьсемпе (орфографи словарӗпе, синоним словарӗпе, чӑвашла-вырӑсла е вырӑсла-чӑвашла словарьпе) паллаштарасси, вӗсемпе усӑ курма вӗрентесси.
Пӗлтерӗш тӑрӑх сӑмахсене ушкӑнлама хӑнӑхтарасси (тӗслӗхрен, апат-ҫимӗҫ, пахча ҫимӗҫ, ҫи-пуҫ, йывӑҫ, кайӑк-кӗшӗк, тырӑ-пулӑ ячӗсем), ҫав сӑмахсемпе пуплевре тӗрӗс усӑ курма вӗрентесси (сӑмахран, ***чӗкеҫ чӗвӗлтетет, ҫерҫи чӗриклетет, курак краклатать, ҫӑхан кранклатать, куккук авӑтать, карӑш (путене) авӑтать, шӑпчӑк ( тӑри, шӑнкӑрч )*** юрлать т.ыт.те.
Сӑмах тытӑмӗпе пулӑвӗ.
ОРФОГРАФИ
Сӑмах тымарӗ. Аффикссем — сӑмах тӑваканнисем тата сӑмаха улӑштараканнисем. Сӑмаха улӑштаракан аффикссем ҫӗнӗ сӑмах тума пултарни: ***каярахпа, тӑхтарахпа, каҫпа, ирпе; лӗмрен, авалтан; пӗрерӗн, виҫшерӗн; кӑмӑллӑн, хаяррӑн, ҫиллессӗн*** т. ыт.те.
Мӑшӑр сӑмахсем, вӗсене тӗрӗс ҫырасси.
Икӗ хут калакан сӑмахсене тӗрӗс ҫырасси.
Хутлӑ сӑмахсем, вӗсен тӗсӗсем, тӗрӗс ҫырасси.
Сӑмах вырӑнӗнче ҫӳрекен пӗрлешӳсем, вӗсен тӗсӗсем, тӗрӗс ҫырасси, ят пӗрлешӳсем (***куҫ харши, пит ҫӑмарти, тур палли, кача пӳрне, ҫӗнӗ ҫын, упа сарри*** т.ыт.); глагол пӗрлешӳсем ***(ырӑ ту, кӑмӑл ту, усал ту, ҫула ҫит, пӗве кӗр, тӑлӑха юл, ҫука юл; такӑнса ӳк, чирлесе ӳк, хӑраса ӳк, ватӑлса кай, ватӑлса ҫит , т.ыт*** те ).
II. Ҫӗнӗ сӑмаха сӑмах форминчен уйӑрма вӗренесси (тӗслӗхрен, ***пулӑш — пулӑшать, пулӑшакан, пулӑшни*** — сӑмах формисем; ***пулӑшу, пулӑшуҫӑ*** — ҫӗнӗ сӑмахсем).
Тӑтшрах тӗл пулакан аффикссем хушса ҫӗнӗ (иккӗмӗшле) сӑмахсем тӑвасси, вӗсемпе пуплевре усӑ курасси.
Словарьсенче ***йӑлана кӗр, ӳте кӗр, татӑлса ан, ҫакӑнса тӑр*** евӗр пӗрлешӳсене тупма хӑнӑхасси. Ҫав пӗрлешӳсене пуплеве кӗртесси, калаҫура асӑрхама вӗренесси.
Сӑмах пулӑвӗпе ҫыхӑннӑ орфографи хӑнӑхӑвӗсене ҫирӗплетесси ***(хӑю — хӑюлӑх, хӑюллӑ; хастар — хастаррӑн; вырт — выртtар, ирт — иртtер*** т. ыт. т.).
Сӑмахсенче пӗрле, уйӑрм тата дефиспа ҫырмалли правилӑсене ҫирӗплетесси.

**<u>Чӑваш чӗлхи предмечӗн содержанийӗ - 6 класс (34 сехет)</u>**
**Тӑван чӗлхе _ пӗлӳ ҫӑл куҫӗ**

**VI класра вěреннине аса илесси**

**I.** Вырăсларан йышăннă е хальтерех çыру урлă йышăнакан сăмахсем: вěсене çырасси (*Польша: Польшăра: Нидерланди _ Нидерландире: меню _ менюра: кристалл _ кристалсем: кристалăн: Настя _ Настьăн* йышшисем).

Тăтăш тата сайра усă куракан сăмахсем. Вырăнти сăмахсем.

*Тăна кěр: тара ўк: чухласа ил: кайса ўк* йышши сăмахсем.

**II.** Словарьсемпе усă курма хăнăхтарасси. Хамăр тăрăхри йывăç-курăк: чěр чун: кайăк-кěшěк: хурт-кăпшанкăсен чăвашла тата вырăсла ячěсемпе паллаштарасси: чăвашла ятсене пуплеве кěртсе пырасси. Çавнашкал ятсен пěчěк словарěсене тăвасси.

**Морфологипе орфографии**

1. Чěлхери сăмахсен ушкăнěсем. Пуплев пайěсем. Морфологи – чěлхери сăмахсен тытăмě, вěсен ушкăнěсемпе пěлтерěшěсем çинчен вěрентекен наука. Чěлхери сăмахсене ку таранччен мěнлерех ушкăнлани. Вěсене çěнěлле ушкăнлама май пурри: хăй пěлтерěшлě сăмахсем (тулли пěлтерěшлисем, тулли мар пěлтерěшлисем); пулăшу сăмахěсем (союзсем, хыç сăмахсем, татăксем); междометисем. Тулли мар пěлтерěшлě сăмахсем (пуплеве хăйсем тěллěн тухма пултарайманнисем) шутне тěрлě пуплев пайěнчисем ( япала ячěсем, паллă ячěсем, глаголсем) кěни.

**Япала ячěсем** Япала ячěсен пěлтерěшě, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхěсем (мěнле пуплев пайěсене ăнлантарни). Япала ячěсен пуплеври тăтăшлăхě, паллă ячě пек те, наречи пек те çўреме пултарни: *йывăç çурт, улма йывăç, чул кěпер; кěркунне çитрě – кěркунне час-часах çумăр çăвать; Мăн кун эрни иртрě – чăваш чěлхи урокě эрнере иккě пулать.* Тулли мар пěлтерěшлě япала ячěсем: *тěл, пат, ум, хыç, ай, çи, çум, çěр (каланă çěрте)* т.ыт.те. Хăш-пěр япала ячěсем тулли мар пěлтерěшпе те, тулли пěлтерěшпе те çўреме пултарни: *вăхăт, самант, хушă, çул, кун, сехет* т.ыт.те. Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем. Япала ячěсен хисепěсем – пěрреллě тата нумайлă хисеп. Хисеп тăрăх улшăнман ятсем. Пěрреллě хисепěн пуплеври уйрăмлăхěсем. Нумайлăха палăртмалли мелсем: *ял-ялсем; ял-ял витěр тухрăмăр; чылай çын, чылайăшě, ытларахăшě (лексика мелě).* Япала ячěсен пулăвě: аффикссем хушăнни, мăшăрлатни *(сěтел-пукан, апат-çимěç, иртен-çўрен).* Япала ячě тăвакан тухăçлăрах аффикссем: ***-лăх(-лěх), -çă(-çě), -у(-ў), -ăç(-ěç), -ăм(-ěм)*** т.ыт.те. Япала ячěсен вěçленěвě. Вěçленў уйрăмлăхěсем. Япала ячěсен падеж системине кěмен аффиксěсем***: -ри, -ти, -чи, -хи, -лă(-лě), -сăр (-сěр), -ла(-ле), -серен, -чен.*** Ку аффикслă япала ячěсене паллă ячěсемпе наречисенчен уйăрасси. Камăнлăха палăртмалли мелсем. Камăнлăх формисем (сăпатсемпе хисепсем). Камăнлăх формисенчи япала ячěсен вěçленěвě, вěсене тěрěс каласси тата çырасси. Камăнлăх форми (3-мěш сăпат) çыхăнăва палăртма пултарни: *кěтў ачи, шкул ачи, пуç тутри, мăй тутри.* Вырăс чěлхинчен йышăнакан япала ячěсен вěçленěвě, вěçленў формисене тěрěс çырасси.

**Паллă ячěсем**

Паллă ячěсен пěлтерěшě, морфологи паллисемпе синтаксис уйрăмлăхěсем. Паллă ячě ытти пуплев пайě пěлтерěшěпе çўрени. Паллă ячěсен пахалăх виçине кăтартакан формисем: тěп форма (*вată, çамрăк*), танлаштару форми (*ватăрах, çамрăкрах*), вăйлă форма (*питěвата, чи вата, шутсăр вата, чи çамрăк,çап- çамрăк, ытла та çамрăк).* Çав формăсене тумалли мелсем. Танлаштару тата вăйлă формăри паллă ячěсене тěрěс çырасси. Иккěмěшле паллă ячěсем, вěсен пулăвě: *çывăхри, паянхи, çěрлехи, пěрлехи* - паллă ячěсем; *хулари, шкулти, Етěрнери, Хусанти* – япала ячěсем. *Вырăнлă, вырăнсăр, черетлě, черетсěр* – паллă ячěсем, *икě вырăнлă купе, виçě чўречеллě пўлěм* - япала ячěсем. Пахалăха хакланине палăртакан паллă ячěсем: *пěчěк, пěчěкçě, имшер – имшеркке, çăмăл – çăмăлттай.* Паллă ячěсем **–и, -скер** аффикссем йышăнни, çав аффикслă формăсен улшăнăвě, улшăнăва кура тěрěс çырасси. Паллă ячěсен пуплеври вырăнě, вěсем япала ячě

умĕнче (*кăвак, пĕлĕт*), япала ячĕ вырăнĕнче *(куç хитрене юратать; ырăран ырман теççĕ),* глагол çумĕнче çӳреме пултарни *(çил витĕр вĕрет, юнашар кил, тăрăх пăхса утать, урлă урам).*

**Хисеп ячĕсем**

Хисеп ячĕсен пĕтĕмĕшле паллисем: пĕлтерĕшĕ, морфологипе синтаксис уйрăмлăхĕсем (мĕнле сăмахсемпе çыхăнма пултарни). Хисеп ячĕ ытти пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе çӳрени. Тулли тата вак хисепсем. Хисеп ячĕсен ушкăнĕсем: шут хисепĕсем, йĕрке хисепĕсем, валеçӳ хисепĕсем, пĕтĕмлетӳ хисепĕсем, вĕсен паллăрах уйрăмлăхĕсем, пуплеври вырăнĕ. Шут хисепĕсен тулли тата кĕске формисем. Шут хисепĕсем ***–ри(-ти)*** аффикс йышăнни *(вуннăри шăллăм, çирĕм виççĕри аппа, вăтăрти ар çын, çитмĕлти асатте).* Хисеп ячĕсен вĕçленĕвĕ, вĕçленӳри уйрăмлăхсем. Хисеп ячĕсене тĕрĕс çырасси.

**Местоименисем**

Местоименисен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем. Местоимени ушкăнĕсем (пĕтĕмĕшле паллаштарасси). Местоименисен вĕçленĕвĕ. Местоименисене тĕрĕс çырасси.

**Наречи**

Наречи пĕлтерĕшĕ, ытти пуплев пайĕсенчен уйăрмалли паллăсем. Наречисен пулăвĕ. Наречипе япала ячĕ, наречипе паллă ячĕ, наречипе деепричасти. Наречисене тĕрĕс çырасси. Калаçура тата çырура синоним тата антоним наречисемпе усă курасси *(нарастаран – айăпсăр; хăвăрт – хуллен – майĕпен – ерипен).* Наречипе ытти пуплев пайĕсен синонимлăхĕ *(васкаса – васкавлăн; хуллен – васкамасăр).* Наречисемпе тан пĕлтерĕшлĕ сăмах ушкăнĕсем *(ялан – пĕрех май, пĕр май).*

**Евĕрлев сăмахĕсем** (евĕрлевсем). Евĕрлевсен пĕлтерĕшĕ, пуплеври вырăнĕ. Евĕрлев сăмахĕ ытти пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе çӳрени. Евĕрлевсен тĕсĕсем: сасă евĕрлевĕсем, сăнар евĕрлевĕсем. Евĕрлевсен вариантлăхĕ (шăлтăр-шăлтăр - шăлтăр-шалтăр; шĕпĕр-шĕпĕр, шепĕр-шепĕр, шапăр-шапăр (çумăр). Вариантсен пĕлтерĕшĕ улшăнма пултарни. Евĕрлевсенчен ытти пуплев пайĕсенчи сăмахсем пулни *(лăпăртат, лĕпĕртет, танкăлтат, тĕнкĕлтет; лăпăрти, ахăлти, якăлти)*, çав сăмахсен стиль уйрăмлăхĕсем.

**Глагол**

Глагол пĕлтерĕшĕ, тулашри паллисем. Глагол тĕпĕ. Вăл – глаголшăн пуçламăш форма (е словарь форми) пулни. Глаголăн пулаю форми (*пĕлтĕм – пĕлейрĕм, пĕлеймерĕм).* Глаголăн сăпатлă формисем. Кăтарту наклоненийĕ, вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнни. Кăтарту наклоненийĕ унăн вăхăчĕсем: хальхи вăхăт, иртнĕ вăхăт, пулас вăхăт. Иртнĕ вăхăт формисем: пĕрре иртнĕ вăхăт *(куртăм, куртăн, курчĕ)*, темиçе иртнĕ вăхăт *(кураттăн, куратчĕ).* Кăтарту наклоненийĕнчи глаголсене тĕрĕс çырасси. Хушу наклоненийĕн формисене тĕрĕс каласси тата çырасси (*кайччăр, вулаччăр - кайччĕр, вулаччĕр е кайчăр, вулачăр* мар). Ĕмĕт наклоненийĕ, унăн формисене тĕрĕс çырасси. Килĕшӳ наклоненийĕ, унăн пĕлтерĕшĕ, сăпатланăвĕ. Сăпатлану формисене тĕрĕс çырасси. Глагол формисен пĕлтерĕшĕ улшăнни. Глаголăн сăпатсăр формисем. Сăпатсăр формăсен ушкăнĕсем: причасти, деепричасти, инфинитив. Сăпатсăр формăсене сăпатлисенчен тата пĕр-пĕринчен уйăракан паллăсем. Сăпатсăр формăсен пĕлтерĕшĕсем, пуплеври тăтăшлăхĕ, вырăнĕ. Причасти. Причастин тухăçлă тата тухăçсăр формисем. Хальхи причасти, унăн формисем ***–акан(-екен)***тата ***–ан(-ен)*** аффикссем. Хальхи причасти падеж тата хисеп тăрăх улшăнни. Хальхи причастин çуклă форми, вăл иртнĕ причастиннипе пĕр килни: *вулакан кĕнеке – вуламан кĕнеке; вуланă кĕнеке - вуламан кĕнеке.* Хальхи причастин пуплеври вырăнĕ: *тăрăшакан ача; таракана пĕр çул, хăвалакана çĕр çул; ывăл ача ашшĕне, хĕр ача амăшне хывакан; вăл çынпа хирĕçекен мар; ача утакан пулчĕ.* Хальхи причасти **-и** тата **-скер** аффикссем йышăнни. Иртнĕ причасти, унăн çуклă форми, пуплеври вырăнĕ (*ĕçленĕ ĕç,*

*ĕçленĕ чух (ĕç хыççăн), ачасем переменăна тухнă).* Иртнĕ причасти **-и**тата **-скер** аффикссем йышăнни, çав аффикслă формăсем япала ячĕ вырăнĕнче çӳрени. Пулас причасти, унăн çуклă формисем тата хăш-пĕр падеж формисем (*каяссăн, каясса; хĕвел анаспа; чирлесрен сыхлани*). Пулас причастин **–шăн(-шĕн)** аффикслă форми, унăн вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ. Пулас причастин пуплеври вырăнĕпе тăтăшлăхĕ. Хальхи, иртнĕ, пулас причастисен *пул* глаголлă пĕрлешĕвĕсем: *Ача утакан пулчĕ. Анне ĕçе кайнă пулнă. Ĕçе вăхăтра тăвас пулать.* Вĕсен пĕлтерĕшĕ. Пулмалли причасти, унăн формисем, пуплеври вырăнĕ. Çителĕклĕх причастийĕ, унăн пулăвĕ, пуплеври вырăнĕ, пĕлтерĕшĕ. Тăтăшрах тĕл пулакан деепричасти формисем: **-сан (-сен), -сассăн (-сессĕн); -нăçемĕн (-нĕçемĕн), -нăçем(-нĕçем), -иччен, -са (-се), -а(-е),** вĕсен вариантлăхĕ. Инфинитив. Инфинитив формисем: **-ма (-ме), -машкăн (-мешкĕн)** аффикслисем. Вĕсен пуплеври вырăнĕ. Чăваш чĕлхинчи инфинитивпа вырăс чĕлхинчи инфинитив, вĕсен уйрăмлăхĕ. Глагол урăх пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе çӳрени.

## <u>7класс</u>

***Глаголăн сăпатсăр формисем. Сăпатсăр формăсен ушкăнĕсем: причасти, деепричасти, инфинитив. Сăпатсăр формăсене сăпатлисенчен тата пĕр-пĕринчен уйăракан паллăсем.***

Сăпатсăр формăсен пĕлтерĕшĕсем, пуплеври тăтăшлăхĕ, вырăнĕ.

Причасти. Причастин тухăçлă тата тухăçсăр формисем.

Хальхи причасти, унăн формисем – ***-акан(-екен)***тата ***-ан(-ен)*** аффикссем. Хальхи причасти падеж тата хисеп тăрăх улшăнни.

Хальхи причастин çуклă форми, вăл иртнĕ причастиннипе пĕр килни: *вулакан кĕнеке – вуламан кĕнеке; вуланă кĕнеке – вуламан кĕнеке.* Хальхи причастин пуплеври вырăнĕ: *тăрăшакан ача; таракана пĕр çул, хăвалакана çĕр çул; ывăл ача ашшĕне, хĕр ача амăшне хывакан; вăл çынпа хирĕçекен мар* (у.к. *хирĕçмест); ача утакан пулчĕ.*

Хальхи причасти ***-и*** тата ***-скер*** аффикс йышăнни.

Иртнĕ причасти, унăн çуклă форми, пуплеври вырăнĕ *(ĕçленĕ ĕç, ĕçленĕ чух* (е *хыççăн), ачасем переменăна тухнă).*

Иртнĕ причасти ***-и*** тата ***-скер***аффикссем йышăнни, çав аффикслă формăсем падеж тата хисеп тăрăх улшăнни.

Иртнĕ причастин сказуемăй пулнă чухнехи вăхăт пĕлтерĕшĕ.

Иртнĕ причастин пуплеври тăтăшлăхĕ, унăн ***-и*** аффикслă форми япала ячĕ вырăнĕнче çӳрени.

Пулас причасти, унăн çуклă формисем тата хăш-пĕр падеж формисем *(каяссăн, каясса; хĕвел анаспа; чирлесрен сыхлан).* Пулас причастин ***-шăн(-шĕн)***аффикслă форми, унăн пуплеври вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ.

Пулас причастин пуплеври вырăнĕпе тăтăшлăхĕ.

Хальхи, иртнĕ, пулас причастисен *пул* глаголлă пĕрлешĕвĕсем*: Ача утакан пулчĕ. Анне ĕçе кайнă пулнă. Ĕçе вăхăтра тăвас пулать.* Вĕсен пĕлтерĕшĕ.

Пулмалли причасти,унăн формисем, пуплеври вырăнĕ.

Çителĕклĕх причастийĕ,унăн пулăвĕ, пуплеври вырăнĕ пĕлтерĕшĕ.

Деепричасти пĕлтерĕшĕ,унăн уйрăмлăхĕсем, пуплеври вырăнĕ.

Тăтăшрах тĕл пулакан деепричасти формисем: ***-сан(-сен), -сассăн(-сессĕн); -нăçемĕн(-нĕçемĕн), - нăçем(-нĕçем), -иччен, -са(-се), -а(-е),*** вĕсен вариантлăхĕ.

Инфинитив. Инфинитив формисем: ***-ма(-ме), -машкăн(-мешкĕн)***аффикслисем. Вĕсен пуплеври вырăнĕ.

Чăваш чĕлхинчи инфинитивпа вырăс чĕлхинчи инфинитив, вĕсен уйрăмлăхĕ.

Глагол урăх пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе çӳрени.

